Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

67 (7921) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи çурла (август) уйăхĕн 31-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Вĕренсен ăнăçу пулатех

**Кам – шкула, кам – университета**

– Эпир çемьере икĕ ача: эпĕ тата шăллăм. Атте – Вениамин Иванович – В. Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕнче тăрăшать. Ĕçлемесĕр çăкăр пулманнине кулленхи ĕçĕпе пире кăтартса пырать. Анне те – Алина Вениаминовна – ĕç ĕмĕрĕн пысăк пайне районти 2-мĕш номерлĕ больницăра кĕçĕн медперсоналта вăй хурать. Куратăр пулĕ, пирĕн çемьере «пысăк çынсенни» пек çӳлтен ӳкекен çук. Апла пулсан пĕтĕм ăнăçу хамăр тăрăшулăхра. Çакна эпĕ ачаран ăса хывса кăçал алла вăтам пĕлӳ илнине çирĕплетекен аттестат илтĕм, – кăмăллăн калаçать хăйĕн ылтăн медалĕпе мухтанмасăр Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан вĕренсе тухнă Иван Петров **(сăн ӳкерчĕкре – сулахайра)**.



Авăн уйăхĕн пуçламăш кунĕсем – Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан вĕренсе тухнисемшĕн, хăйсен ытти пиншер тантăшĕ пекех, анлă пурнăç çулĕ çине пĕрремĕш утăм тунă вăхăт.

– Малашлăха мĕнре куратăн? – ыйтрăм Иванпа юнашар тăракан тантăшĕнчен Владислав Одинцовран **(сылтăмра)**. Сăмах май вăл та вăтам шкулти вĕренĕвне ылтăн медальпе вĕçлерĕ.

– Эпир Иванпа пĕр шухăшлă пулса техникăлла пĕлӳ илес çул суйларăмăр. Раççейре çĕнĕ технологисем вăй илсе пынă вăхăтра хамăр суйлава тĕрĕс тесе шутлатпăр. Хамăра вĕрентнĕ учительсем те пирĕн шухăша ырларĕç кăна. Тăван шкулта ылтăн медальлĕх вĕренсе ăс илни пурнăç çулĕ çинче усăллă пуласси пирки иккĕленӳ çук, – терĕ Владислав куçне пĕрле вĕреннĕ Елена Спиридоновăпа Вероника Шатунова çинчен илмесĕр **(сăн ӳкерчĕкре – варринчисем)**. Вĕсем те ăнăçлă вĕçлерĕç шкул курсне. Хисеп хучĕсене тивĕçрĕç.

– Пирĕн шанчăка малашне те ан çухатăр, ĕмĕтĕре сӳнме ан парăр. Тĕл пулакан йывăрлăхсене алă усмасăр çĕнтерме тăрăшăр тата тăван шкула та манса ан кайăр, – тенĕччĕ яшсемпе хĕрсене аттестатсем панă каç шкул директорĕ К. Спиридонов.

Шкул çулĕсенче пĕр çемьери пек пурăннă ачасем пурнăç çулĕнче те туслăха çухатмасса шанас килет. Ăнăçу сунатпăр сире!

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Сентябрĕн 1-мĕшĕ – Пĕлӳ кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ ПЕДАГОГСЕМ, ВĔРЕНЕКЕНСЕМ ТАТА ВĔСЕН АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!**

Пĕлӳ кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп! Ку уяв чăннипех те халăх уявĕ пулса тăчĕ. Ăна шкул пурнăçне асра тытакан аслисем те, ачасем те паллă тăваççĕ.

Кăçал парта хушшине 3740 ача ларать. Пĕрремĕш класа килекен 368 ача пĕлӳ тĕнчине çул уçать. Çакăнта вĕсене хăйсен ĕçне пĕлекен опытлă педагогсем те, халĕ кăна аслă вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăк специалистсем те çул кăтартса пырĕç.

Пур педагогсене те хăйсен профессине парăннăшăн, вăхăтпа тан пыма пултарнăшăн тата тăрăшнăшăн, ачасене юратнăшăн, кашни ачарах уйрăм çынна курма пултарнăшăн тав сăмахĕ калатăп.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ ăнăçлă ĕçпе тулли пултăр, çĕнĕ ӳсĕмсем илсе килтĕр! Кăмăла курса ĕçлĕр тата вĕренĕр!

Пурсăра та çирĕп сывлăх, вĕренӳре ăнтăлу тата пур ырă пуçарусенче те ăнăçу сунатăп.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ВĔРЕНТЕКЕНСЕМ, АШШĔ-АМĂШĔ! ХАКЛĂ ÇАМРĂК ТУССЕМ!**

Сире 2011 – 2012 çулсенчи çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа саламлатăп!

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ Пĕтем тĕнчери хими çулталăкĕн тата вырăс халăхĕн паллă ăсчахĕ Михаил Васильевич Ломоносов 300 çул тултарнине паллă тунă çулăн хĕрӳ тапхăрĕнче пуçланать. Вăл ăнăçлă пуласса шанас килет.

Сирĕн çăмăл мар ĕçшĕн тата малашнехи ответлăхшăн тав тăвас килет.

Яланах сирĕн умăрта ăнăçу та уçăмлăх пултăр! Сире творчествăлла çитĕнӳсем, çĕнĕрен те çĕнĕ ĕçсем, профессиллĕ ăнтăлусем тума тата иксĕлми вăй-хăват сĕнетĕп!

**З. ДИПЛОМАТОВА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ.**

**Çурт-йĕр юсама илĕç**

## Хваттерсем хăтлă пулĕç

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 333-мĕш хушăвĕпе килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсама патшалăх корпорацийĕн – Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшакан фондран тата республика бюджетĕнчен 2011 çулта муниципалитетсене мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрассине палăртрĕç. Çапла вара Муркаш районĕнчи нумай хваттерлĕ сакăр çурта тĕпрен юсамашкăн уйăрма пăхнă субсиди калăпăшĕ 7865280 тенкĕпе танлашать. Субсиди çак пайсенчен тăрать: 4500000 тенкĕ патшалăх корпорацийĕнчи – Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăламалли фондри укçа-тенкĕ, 1485634 тенкĕ республика бюджетĕнчен, 1485634 тенкĕ район бюджетĕнчен, 394012 тенкĕ харпăр хăй укçи-тенки.

Çапла вара «2011 çулта Чăваш Республикин территорийĕнче нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсасси» тĕллевлĕ программа ку тĕлĕшпе ĕçлет. Йышăнăва пурнăçа кĕртнине Чăваш Республикин Строительство министерстви тĕрĕслесе тăрĕ.

Районта халĕ нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсас тĕлĕшпе ертсе пыракан компани конкурс ирттернĕ. Çавна май подрядчиксем те паллă. Çитес вăхăтра вĕсем юсав ĕçĕсене пуçăнĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Вырма – 2011**

## Ĕçсене вĕçлерĕç

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсемшĕн кăçалхи вырма уяр кунсемпе асра юлĕ. Акса ӳстернĕ тыр-пула çухатусемсĕр пуххса кĕртме пур мелсем те пулчĕç. Агротехникăна пăхăнса ĕçлекенсем тунти кун тĕлне вырма ĕçĕсене вĕçлерĕç те. Вĕсен шутĕнче: «Восток», «Оринино», Чкалов яч. хис. кооперативсемпе «ДаАн», «Бездна» обществăсем тата С. Сретинскийăн, В. Горбуновăн, А. Толстовăн, А. Никитинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсем. Технологие пăхăнса тирпейлĕ ĕçлени вырмана çухатусемсĕр иртермелли çул-йĕр пулчĕ.

Вырма вĕçленисем паян ыттисене пулăшас ĕçе кӳлĕнчĕç. Çурла уйăхĕн 29-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсен уйхирĕсенче пурĕ 43 «хир карапĕ» ĕçлерĕ.

Асăннă кун тĕлне район 12646 гектар çинче (84 процент) вырма ĕçĕсем ирттернĕ. Тыр-пулăн вăтам тухăçĕ – 25,2 центнер.

## Улăм пуçтараççĕ

Ыранхи куна пăхса ĕçлекенсем «хир карапĕсем» хыççăнах улăм пуçтарассине йĕркеленĕ. Çак эрне пуçланнă тĕле хуçалăхсем пĕтĕмпе 9630 гектар улăмран тасатнă. Ку ĕçсем пур хуçалăхсенче те кал-кал пыраççĕ. Çĕр ĕçченĕсем улăма рулон прессемпе пресласа выльăх фермисем çывăхне турттарассипе тимлеççĕ. Ял çыннисене улăмпа тивĕçтересси те нихăш хуçалăхра та уксахламасть.

## Тырă акаççĕ

Уй-хир ĕçĕсен планĕсемпе килĕшӳллĕн районăн кăçал кĕрхи культурăсене 6 пин гектар ытла акса хăвармалла. Тырă-пулăран, улăмран тасалнă хирсенче паян чылай çĕрте кĕр аки пырать. Эрне пуçланнă тĕле районта 1468 гектар кĕртрисем акса хăварнă та. Ака ĕçĕсен калăпăшĕ «ВаСем», Суворов яч. хис., «Восток», «Оринино», «Колос» кооперативсемпе А. Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче уйрăмах пысăк.

**А. БЕЛОВ.**

**Çырăнтару**

**Хаклă вулакансем!**

**Райхаçата малалла çырăнтараççĕ. Октябрь уйăхĕнчен илсе тăма çыхăну уйрăмĕн ĕçченĕсемпе тĕл пулма васкăр.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

**Конкурс**

## Республикăра малтисем

Çак кунсенче шкулсем çумĕнчи лагерьсенче воспитани ĕçне епле йĕркеленине палăртассипе ирттерекен республикăри конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Конкурса республикăри 18 районпа хулари вĕрентӳ учрежденийĕсенчен шкулсем çумĕнчи лагерьсен профиль сменин 43 программине тăратнă. Ытларах кунта комплекслă программăсем пулнă. Кунпа пĕрлех вара хăшĕсем çарпа спорт, экологипе биологи, литературăпа пултарулăх, культурологи тата ытти енĕпе те программăсем хатĕрленĕ. Пĕтĕмĕшле баллсен шутне палăртнă чухне сĕннĕ программăна кăна мар, ăна мĕнле ĕçе кĕртме пултарнине те шута илнĕ.

Эксперт комиссийĕ çĕнтерӳçĕсемпе призерсене виçĕ номинацире палăртма йышăннă. Кусем вĕсем «Пришкольный лагерь, реализующий программу профильной смены на базе городского общеобразовательного учреждения», «Пришкольный лагерь, реализующий программу профильной смены на базе сельского общеобразовательного учреждения» тата «Пришкольный лагерь, реализующий программу профильной смены на базе учреждения дополнительного образования детей».

Юнкăри С.М. Михайлов ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул, чи нумай, 756,2 балл пухса, «Пришкольный лагерь, реализующий программу профильной смены на базе сельского общеобразовательного учреждения» номинацире пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Танлаштарма: иккĕмĕш вырăна тухнă Элĕк районĕнчи Шуркасси Юнтапа шкулĕн – 409,5 балл.

**Хамăр инф.**

**Саламлатпăр**



Хаклăран та хаклă мăшăра, аннене, хунямана, кукамая – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Лариса Валериановна СУРИКОВĂНА** ĕнер 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăл-туйăмлă пулмалла пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Малашне те мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе, мĕн пур тăванупа пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Пире ырă сунса яланах пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, 1 ывăлĕ, 2 кĕрӳшĕ, 4 мăнукĕ, хунями, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнă аннене, хунямана, аппана, йăмăка, çепĕç чунлă асаннене, çывăх тăвана – Муркашра пурăнакан, августăн 28-мĕшĕнче сумлă юбилейне паллă тăвакан **Людмила Поликарповна ИВАНОВĂНА** чун-чĕререн ырă та чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Ачусемпе, мăнукусемпе тата мĕн пур тăванпа пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан татăлтăр, тăванусенчен пуян пултăр. Пире ырă сунса яланах пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕ мăшăрĕсемпе, юратнă мăнукĕсем, аппăшĕсемпе шăллĕсен çемйисем, çывăх тăванĕсем, тăхлачи тата юлташĕсем.**

# Кунта ыранхине пăхса ĕçлеççĕ

Вырма маршручĕсемпе



çухатусемсĕр пухса илмелле. Паян В. Соловьевпа А. Степанов тата П. Толикинпа А. Алексеев комбайнерсен экипажĕсем юлашки гектарсем çинчи тырăна вырса тирпейлессипе тимлеççĕ.

Хуçалăхăн 3 йĕтемĕ çинче те иртен пуçласа каçченех алакан тата тырă типĕтекен агрегатсен сасси чарăнмасть. Ĕçлекенсен савăнăçлă калаçăвĕпе кăмăллă кулли те иртсе пыракан вырман уйрăлми пайĕ.

«Свобода» хуçалăхăн кăçалхи вырма планĕ 1122 гектар. Вĕсенчен 450 гектарĕ кĕрхи культурăсем. Кĕртри те, çуртри те кăçал ăнса пулнă. Гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 24,7 центнерпа танлашать. Паянхи фоторепортажа Кашмашри К. Яриков ертсе пыракан йĕтем çинче турăмăр.

*Алексей Кирпичников, Евгений Данилов, Виталий Семенов çамрăксем ĕçрен хăраса тăмаççĕ.*

*Галина Толикинăпа Клава Перлова ĕçченсем пĕрле вăй хуракансемшĕн тĕслĕх вырăнне.*



*Тырă аланă çĕрте тимлекен Галина Степанова.*



Ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» хуçалăхзаводра çĕр ĕçченĕсем хăйсен ĕçĕпе тăрăшулăхĕ çине шанса ĕçлесси ăруран ăрăва пыракан ырă йăла. Вуншар çул пырать вăл, çĕр-шыври политикăпа экономикăн нихăш хумĕ айне те пулман. Мĕнре-ха сăлтавĕ? «Аттесемпе асаттесем пуçарнă ĕçе пирĕн юхăнтарма, уксахлаттарма юрамастех», – теççĕ хуçалăхра чунне парса ĕçлекенсем. Паян вĕсен пысăк пайĕ вырмара тимлет. Хуçалăхăн тĕп агрономĕ А. Блинов каланă тăрăх Кашмашсемпе Çатракассисен тата Йӳтĕркассисен кăçал 1122 гектар çинчи ăнса çитĕннĕ тырă-пулăна Кашни ĕçчен куçĕнчех ăнса пулнă тырă тухăçĕпе тулли кăмăл хуçаланать. Йĕтем айĕнчи тирпейлĕх Кашмашсем вырмана тăрăшса хатĕрленнине сăнлать.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Çĕр пайĕпе мĕн тумалла?

Ялта пурăнакансем валли

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче ял хуçалăх çĕрĕсен пысăк пайне колхозсемпе совхозсен харпăрлăхĕнчен илсе ялта пурăнакансене пĕрлехи пай прависемпе е коллективлă харпăрлăх прависемпе валеçрĕç. Ял çыннисене ун чухне çĕре списокпа пайласа пачĕç. Çавна май кашнинех вăл вăхăтра çĕр кĕнекинче регистрацилени çинчен пĕлтерсе свидетельствăсемпе тивĕçтерчĕç. Паян вара çĕр ĕçченĕсем, ял çыннисем умĕнче çĕр пайĕсемпе епле усă курас ыйту çивĕч тăрать.

Çĕр пайĕ вăл – маларах асăннă свидетельствăсемпе ял хуçалăх çĕрĕсен пĕр пайĕ тĕлĕшпе çирĕплетнĕ гражданинăн абстрактлă прави. Унта çĕр калăпăшне кăна кăтартнă, анчах вăл свидетельствăпа асăннă пай ăçта вырнаçнине пĕлме çук. Нумайăшĕн умĕнче çĕршер çын валли уйăрнă хир выртать, анчах хăш пайĕпе кам усă курма пултарнине никам та пĕлмест. Ăна пĕлме çĕр участокне уйăрса илессипе паян кашнийĕнех конкретлă ĕçсем туса ирттермелле. Унченхи çулсенче, ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен пусă çаврăнăшĕ пирки калакан саккун ĕçе кĕриччен, вăл пайсене ял çыннисем килĕшӳ туса пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене арендăна пама пултарнă. Халĕ вара правилăсем улшăнчĕç. Асăннă саккун ĕçлеме пуçланă хыççăн ял çынни çĕр участокĕн чиккисене палăртсан, ăна патшалăх кадастр учетне тăратсан, çĕр пайĕ тĕлĕшпе регистраци свидетельствине алла илсен çеç çĕр пайне арендăна пама пултарать.

Саккунри 2011 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕнĕ улшăнусем çĕр пайне икĕ мелпе уйăрса илме май параççĕ: пĕрлехи пуху йышăнăвне тĕпе хурса тата индивидуаллă йĕркепе. Иккĕмĕш çулпа пĕрремĕш йĕркепе çĕр уйăрма тăрăшни, анчах çĕр участокĕн чикĕ проектне пуху çирĕплетмен пулсан усă курма пулать.

Çĕр пайне уйăрса илес ĕçре çак ĕçĕн пуçаруçи кирлĕ. Ун çине пайсем уйăрассин пуçламăш ĕçĕсем тиенеççĕ те. Мĕн тумаллаха унăн? Çакăн йĕркине паллаштарас тетĕпĕр те эпир паян сире. Пĕрремĕш утăмпа унăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ патне пĕрлехи пуху ирттерес ыйтупа тухмалла.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн пай хуçисене пурне те пулас пуху пирки пĕлтермелле. Вăлах район хаçатне тата информаци стенчĕсене, район администрацийĕн сайтне пулас пуху пирки пĕлтерӳсем вырнаçтарать. Çав пĕлтерӳсенче пуху кунĕ, вырăнĕ, тĕллевĕ тата кун йĕркийĕ пулмалла. Çакăн хыççăн 40 кунтан пуху ирттерме юрать. Пухура çĕр пайĕсене уйăрма йышăну тусан пулас харпăрлăхçăсен хисепне, çĕр калăпăшне палăртаççĕ, уполномоченнăй суйлаççĕ т. ыт. те.

Пухура суйланă уполномоченнăй çĕр участокĕсен проект чиккисене палăртас тĕллевпе подряд килĕшĕвĕ тума кадастр инженерĕ патне тухать. Кадастр инженерĕ çĕр пайĕсене чикĕлес ĕçсене туса ирттерет, хаçат урлă ытти пайçăсене хăй туса ирттернĕ ĕçсем пирки тата пĕлтерӳ хыççăн тепĕр 30 кун хушшинче уйăракан çĕр участокĕсем тĕлĕшпе хирĕçленисене йышăнни çинчен пĕлтерет. Çакна туса ирттернĕ хыççăн халăх суйланă уполномоченнăй ял тăрăхĕн пуçлăхне çĕр участокĕсен чикĕ проектне халăхпа пĕрле йышăнма пуху ирттерме хатĕрри пирки систерет. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ массăллă информаци хатĕрĕсем урлă пуху ирттермелли кун тата пухăвăн кун йĕрки пирки хыпарлать. Унта вăл чикĕлев проектне çирĕплетесси тата уйăрнă çĕр участокне арендăна парас ыйтăва хускатасси çинчен ыйтусем пăхса тухнине кăтартать.

Пĕрлехи пухура çĕр пайĕсен проектне çирĕплетсен уполномоченнăйăн алăра пур документсемпе çĕр участокне кадастр учетне тăратма тата патшалăх регистраци прависене илмелле. Çакна валли унăн Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленине е Чăваш Республикипе ĕçлекен «Çĕр кадастр палати» федераллă патшалăх учреждение каймалла. 2011 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вĕсем иккĕшĕ те пĕр вăхăтрах çĕрсене кадастр учетне тăратма та, патшалăх регистраци прависене пурнăçлама та хутсене йышăнаççĕ.

Çапла вара çĕр пайĕсен хуçисем вăл е ку çĕр участокĕн чиккисене тĕрĕс палăртнă çĕрсен пĕрлехи пай харпăрлăхĕн прависемлĕ хуçисем пулса тăраççĕ.

Енчен те çĕр пайĕсем тĕлĕшпе чикĕ проекчĕсене çирĕплетме пĕрлехи пуху йышăнăвĕ çук пулсан, гражданинăн çĕр пайне харпăр хăй тĕллĕн уйăрса илесси кун йĕркине тухать. Кун пек чухне ял çынни хăй тĕллĕн кадастр инженерĕпе çĕр йĕркелĕвĕн ыйтăвĕсене татса пама килĕшӳ тăвать.

Кадастр инженерĕ çĕр пайĕсене чикĕлессин проектне хатĕрлет. Хаçат урлă ытти пайçăсене хăй туса ирттерекен ĕçсем пирки тата пĕлтерӳ хыççăн тепĕр 30 кун хушшинче уйăракан çĕр участокĕсем тĕлĕшпе хирĕçленисене йышăнни çинчен пĕлтерет. Хирĕçленисем çук пулсан – çĕр участокĕн чикĕлев проекчĕ хатĕр. Çакна туса ирттернĕ хыççăн пай хуçин çĕре кадастр учетне тăратма тата патшалăх регистраци прависене пурнăçлама Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленине е Чăваш Республикипе ĕçлекен «Çĕр кадастр палати» федераллă патшалăх учрежденине каймалли çеç юлать.

Енчен те чикĕлев проектне çирĕплетнĕ вăхăтра ытти пайçăсенчен хирĕçлев пулсан, çĕр участокĕ тĕлĕшпе харпăрлăх правине çирĕплетессине суд татса парать.

Çĕр пайĕсен шучĕпе уйăрса илнĕ çĕрпе унăн хуçи хăйне кирлĕ пек усă курма пултарать: акса тыр-пул туса илме, сутма, арендăна пама, салука хума, парнелеме.

Çĕр пайĕсен шучĕпе çĕр участокĕсем илессипе Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленийĕн специалисчĕсем тата вырăнсенчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем сире тулли хуравсем пама пултараççĕ.

**М. ИВАНОВА,**
**Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленийĕн пресс-секретарĕ.**

# Хирсем пушанни ĕнешĕн хăруша-и?

Сăмах – выльăх тухтăрне

Хĕвел шевли самаях хĕртет пулин те унăн ăшши пĕр-икĕ уйăх каяллахиех мар ĕнтĕ. Кун тăршшĕ тăвата сехете яхăн кĕскелни тата çут çанталăк кĕр еннелле сулăнни ир-каç палăрмаллах сивĕ пулнинчен те аванах курăнать. Кĕр сивви вăй илсе пыни те, ир-каç тăм ӳкни те çу кунĕсем хыçа юлнине систерeççĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсен хирĕсенче вырма ĕçсем вĕçленсе пыраççĕ. Паян нумайăшĕ кĕрхи культурăсем акассипе тимлет. Хирсем пушаннă май çĕр ĕçченĕн хаш сывламалла пек, хăйне канлĕрех туйма пуçламалли вăхăт евĕр туйăнать. Умри ĕçĕсене вăхăтра пурнăçланă ĕçченшĕн ку лайăх та. Тĕрĕссипе çапла пулмалла та. Анчах канлĕх туйăмĕпе хавхаланса тимлĕхе çухатни кĕр мăнтăрĕпе питех те хакла ларма пултарать. Сăмах кунта хирсем ирĕкленнипе тимлĕхе çухатнă кĕтӳçсем ĕнесене клевер-люцерна çине кĕртсе ярса кӳпĕнтерсе яни пирки. Кунашкал тĕслĕхсем районта çуллених пулнине шута илсе асăрхаттару кирлех тесе шутлатăп. Вăл ытлашши пулмĕ.

Çурла уйăхĕн 28-мĕшĕ тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче ĕнесем пурĕ 2137 пуç (çулталăк маларах – 2096 пуçчĕ) шутланаççĕ. Кун çумне уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчи выльăхсене хушар: майрасаллă шултра выльăхсем 11290 пуç (çулталăк пуçланнă тĕле 10517 пуçчĕ). Вăл шутран 7419 пуçĕ (7415 пуçчĕ) ĕнесем. Ял çыннисем иртнĕ çулхи шăрăх çанталăка пула та выльăх йышне сыхласа хăварни вĕсем малашлăх пирки шутланине çирĕплетет. Çавăнпа та кĕр мăнтăрĕпе туллин савăнма ку таранччен ӳстернĕ выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс тĕкел пăхса хĕле кĕртесси, унран ытларах тупăш илесси – ял çыннисем умĕнче тăракан паянхи тĕллев.

Выльăх пăхакансем умĕнче тăракан хальхи тĕп хăрушлăх вăл – ĕнесем кӳпĕнсе кайса вилме пултарни. Малаллахи сăмах çакăн çинчен пулнăран асăннă инкекрен сентябрь-октябрьте уйрăмах асăрханма кирли çинчен пĕлтерес тетĕп. Çулленех çак вăхăтра пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те, ял çыннисен кĕтĕвĕсенче те ĕнесем кӳпĕннĕ тĕслĕхсем пĕрре-иккĕ мар пулаççĕ. Çавна пула выльăх хуçисем ĕнесене вăхăтсăр пусса е вĕлерсе ярса çухатусем тӳсеççĕ. Çакă малашлăха пăхакан çĕр ĕçченĕшĕн курăмлă кăлтăк.

Урамра авăн уйăхĕн илемлĕ кунĕсем. Çĕр ĕçченĕ вырма ĕçĕсене вĕçленĕ май хирте кĕрхи культурăсен калчипе клевер-люцерна кайăвĕ çеç ешерсе ларать. Çакна шута илсе зоотехник-ветеринарсемпе выльăх пăхакансен асăрханулăха уйрăмах ӳстермелле. Ку вăхăтра фермăсенче те, уйрăм çынсен те ĕнесене ирпе-каçпа типĕ утă-улăм çитеклĕ пама тăрăшмалла. Кĕтӳçсен вара ĕне кĕтĕвне клевер-люцерна анисем çине ирхи сывлăмпа тата çумăрлă çанталăкра пачах кĕртме юрамасть. Çав анасем çине кĕске самантлăха кĕртсе кăларнă хыççăн та ĕнесене шăварассинчен асăрханмалла. Тăм ӳкессĕн те унти пусăсенче çӳреме кĕтӳçсен асăрханулăхĕ кирлĕ. Ан манăр! Çав вăхăтрах выльăх кăшманĕн çулçине çини ĕнесене кӳпĕнтермест тата ĕнесене иркаç кăштах çăнăх пани те инкек патне илсе пымасть.

**А. ФЕДОРОВА,**
**выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветврачĕ.**

Ыйту-хурав

## Саккун пуриншĕн те пĕрре

*Паянхи кăларăма Муркаш район прокурорĕн пулăшакане А.Н. ТИХОНОВ ертсе пырать, сирĕн ыйтусем çине хуравлать.*

## Еткерлĕх ыйтăвĕсемпе

**Тĕрлĕ сăлтавсене пула мана еткерлĕх ыйтăвĕпе тĕл пулма тиврĕ, çавна май хăш-пĕр ыйвăрлăх ума тухрĕ. Хăш тĕслĕхсенче еткерлĕх патшалăх харпăрлăхĕ пулма пултарать? Хамăн ыйтăва хаçат урлă пĕлес терĕм.**

**Н. ИВАНОВ.**
**Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.**

Кун йышши ыйтăва Раççей Федерацийĕн Гражданла Кодексĕн 1151 статйи йĕркелесе пырать. Хăш-пĕр тĕслĕхсенче чăнах та еткерлĕх (наследство) патшалăх харпăрлăхĕ пулма пултарать. Енчен те саккунпа килĕшуллĕн тата халаллана (завещани) тăрăх еткерçĕн (наследодатель) еткер (наследник) çук пулсан, пурлăх патшалăх шутне куçать. Енчен те пĕр еткерçĕн те çав пурлăхпа хуçаланма ирĕк çук е еткерçĕсене еткерлĕхрен хăтарнă пулсан малашне пурлăхпа патшалăх хуçаланать. Еткерçĕсем еткерлĕхрен пăрăннă, анчах та никам та еткере вăл е ку сăлтавпа йышăнман пулсан та еткерлĕх патшалăх аллине куçать. Çавăн пекех тўрремĕнех тунă халал хучĕпе еткерлĕх патшалăх харпăрлăхĕ шутланать.

## Опекунăн ирĕк пур-и?

**Харпăр хăйне пăхайман (недееспособный) çын пурнăçран уйрăлчĕ. Маларах вара ăна эпĕ пăхнă (опекун), еткерлĕх çинчен калаçу пулман. Эпĕ пăхнă халсăр çыннăн еткерĕ ман çине куçма пултарать-ши?**

**Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче пурăнакан.**

Саккунпа килĕшуллĕн опекунăн халсăр çын еткерĕпе хуçаланма ирĕк çук. Халсăр çын пурлăхĕ халал хучĕпе тепĕр çын патне куçмасть. Саккунпа килĕшуллĕн вĕсен хăйсене тĕллĕн нотариаллă ĕçсене пурнăçлама ирĕк çук, енчен те хăйсем кăна нотариаллă кантуртан пулăшу ыйтаççĕ пулсан. Халал (завещание) вара вăл – харпăр хăй ирĕкĕпе пурнăçлакан ĕç, ăна çырнă чухне опекун кирлĕ мар.

Пĕлме интереслĕ

## Камран налук тытман?

1941-1992 çулсенче ача çуратманшăн налук илнĕ. 20 – 50 çулсенчи ачасăр арçынсен тата качча кайнă 20 – 45 çулсенчи хĕрарăмсен ĕç укçин 6 процентне патшалăха куçармалла пулнă. Çак налукран кама хăтарнă-ха? «Телейлисен» йышĕнче – Совет Союзĕн Геройĕсем, Мухтав орденĕпе (виçĕ степенĕ те) наградăланисем, çар служащийĕсем. Ача çуралсан е усрава илсен налук тытма пăрахнă. Пĕртен-пĕр ача вилес пулсан ĕç укçинчен каллех налук тытма пуçланă.

Ĕç çынна илем кўрет



## Кашни çынпа тарават

***Кирек епле çыннăн та чунпа парăннă юратнă ĕç пур. Эсир сăн ўкерчĕкре куракан Светлана Альбертовна Петрова вара хăй ĕç ĕмĕрне Мăн Сĕнтĕр райповĕн общественнăй апатлану предприятийĕнче вăй хурса ирттерет, тарават та ăста специалист кунта килекене тутлă апат-çимĕçпе сăйлать.***

***Аслă повар ĕçĕ вара пĕрре те çăмăл мар, кунта апатланма килекене тăтăшах çĕнĕрен те çĕнĕ йышши ĕçме-çиме сĕнмелле, тин кăна вăй хума пуçланă çамрăк специалистсене ĕç вăрттăнлăхĕпе паллаштармалла.***

***– Эпĕ кунта ĕçлеме пуçланăранпа миçе ĕçчен улшăнмарĕ-ши? Маншăн вара çак ĕçрен хакли, сăвапли çук пек те туйăнать. Кашни çын хăй ĕçне килĕштертĕр, ăна тулли кăмăлпа пурнăçлатăр, – терĕ аслă повар кунта тăрăшакансемпе кăмăллă пулнине палăртса. Светлана Альбертовна кунта вăй хума пуçлани вара вăтăр çул пулать. Маттур та ăшпиллĕ хĕрарăма малашне те ăнăçлă ĕçлесе пыма çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатпăр.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ўкерчĕкĕ.**

**Решение Собрания депутатов Юнгинского сельского поселения от 29.08.2011г. № С-9/1**
**О внесении изменений в генеральный план Юнгинского сельского поселения**

Собрание депутатов Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики **решило:**

внести изменения в генеральный план Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, утвержденный решением Собрания депутатов Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 28.11.2008 г. № С-25/1, в части установления зоны промышленности и транспорта и размещения комплекса объектов дорожного сервиса «Транзит Сити» в придорожной полосе федеральной автомобильной дороги М-7 на отметке 611 км. вблизи деревни Юнгапоси.

**Глава Юнгинского сельского поселения В.В. ФОМИН.**

Чунтан тухакан сăмахсем

## Турри пулăшрĕ, полици те оперативлă ĕçлерĕ, тўрĕ шухăшлă çынсем те пурах-ха

Эпĕ Мăн Сĕнтĕрте пурăнатăп. Нумаях пулмасть хамăн мăнукпа Шупашкартан Москакассине çитиччен Муркаш автобусĕпе ларса килтĕмĕр. Москакассинчен вара пире Мăн Сĕнтĕре пĕр çăмăл автомашина илсе çитерчĕ. Кунĕ питĕ шăрăхчĕ. Автотранспорт чарăнăвĕнче чылай хуша алă çĕклесе тăнă хыççăн пире пĕр хĕрарăм водитель чарăнса лартрĕ. Çитес çĕре çитрĕмĕр, анчах та хамăн карçынккана унтах ларса янă. Паллах, çакна водитель асăрхама пултарайман. Карçынккара вара манăн 5 тĕрлĕ документ, кĕсье телефонĕ пурччĕ. Çак сухатушăн хуйхăрса чирлесе кайрăм. Пулăшу ыйтма никам патне каймаллине те пĕлместĕп. Инкексинкек пулман чухне пире полици ĕçченĕсем кирлех мар-ха, халĕ мана вĕсен те кирлĕ пулчĕç. Çапла вара пулăшу ыйтса эпĕ заявлени çыртăм. Ман куçăмна йĕрке хуралçисем ăнланчĕç, мана лăплантарчĕç.

Водитель ман телефон тăрăх шăнкăравланă, анчах хăйне ăçта тупмаллине каламан. Полици ĕçченĕсем ăна телефонпа тупнă, водитель карçынккана килсе паратăп тесе шантарнă.

Эрне иртрĕ, карçынккана килсе паракан çук. Хам Турра ĕненетĕп пулин те чиркĕве çийĕнчех кайма май пулмарĕ. Çапах та Мăн Сĕнтĕр чиркĕвне кайрăм, Игнатий аттене каласа кăтартрăм. Вăл Иоанн воина тархасласа молебен туса пачĕ, манпа пĕрле Турра кĕл турĕ. Çав кăçах хам пурăнакан хваттере манăн карçынккана çамрăк та хитре хĕр илсе килчĕ. Вăл Шупашкарти ярмăрккăра ĕçлет, вăхăт пулманнипе часах килеймен иккен. Карçынккари пур япала та вырăнтах, телефон çинче вара укçи те сахал марччĕ.

Эпĕ мĕн каласшăн-ха кунта? Турă хăвачĕ пысăк. Вăл пурне те пиллет, йĕркелет, халăх çылăхĕсемшĕн хуйхине те парать, хăйĕн ирĕкне кăтартать. Эпĕ те Турра, мухтав Турра, мана пулăшнăшăн.

Полици те маншăн оперативлă ĕçлерĕ. Эпир вĕсем патне шăмат кун каçхи ултă сехетре кайрăмăр. Вĕсем пурте чĕнўре пулнă, унтан таврăнсан манпа чылай калаçрĕç, маншăн тăрăшрĕç. Эпĕ вĕсен ĕçне курман, анчах мана пулăшнине сисетĕп. Хаçат урлă полицире ĕçлекенсене тав сăмахĕ калатăп, сирĕн сывлăх, ăнăçу сунатăп.

Çав водителе те чунтан тав тăватăп. Вăл Светлана ятлине кăна пĕлсе юлтăм. Пирĕн хушăра тўрĕ чунлă çынсем пĕтмен-ха. Карçынккана килсе панăшăн нимĕн те ыйтмарĕ. Пурнăçу ăнăçлă пултăр, хĕрĕм.

**Сире пурне те тав туса З.И. ОВЧИННИКОВА.**

Пĕлтерўсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-5.**

**Çĕр участокĕ çуртпа пĕрле туянатăп.**
**Тел.: 8-902-240-66-94. 3-4.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник.**
**Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 5-5.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира по адресу: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 19, кв. 5. Цена договорная.**
**Тел.: 8-919-673-90-87, 8-919-673-90-89.**

* * *

**Ултă уйăхри хĕрлĕ тынашка сутатпăр.**
**Тел.: 8-905-027-81-99.**

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру в новом доме, 37 кв. м. по ул. Парковая, д. 2 (2 этаж). Тел.: 8-952-025-18-05.**

* * *

**Предприятию требуются станочники всех профилей на металлообработку. Работа в Моргаушах.**
**Тел.: 8-927-866-46-91. 2-2.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:270801:84, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:270801, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

***

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:270101:85, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Вурманкасы, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 2747 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**ПРОФНАСТИЛ**
**производство и продажа**
**любые размеры**
**(до 14 метров)**
**короткие сроки изготовления**
**(в течение 1 дня) услуги**
**по доставке и монтажу**
**цена от 191,67 руб/кв.м.**
**Тел.: 8-937-393-88-18. 1-4.**

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ **Константин Васильевич ДАНИЛОВ** колхозник вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Полици хроникинчен

## Ют пурлăхпа инçе каяйман

Йĕрке хуралçисен кирек епле вырăнта та тимлĕ пулма тивет. Акă вĕсем Мăн Тутаркас ялĕнчи общественнăй транспорт чарăнăвĕнче хăйсене иккĕлентерекен арçынна асăрхаççĕ, вăл Ишмула ялĕнчен пулнă. Мĕнпе «илĕртнĕ-ха» вăл полици ĕçченĕсене? Вĕсен куçĕ умне тўрех хăйпе пĕрле йăтнă полиэтилен сумка курăннă. Унта вара ДВД-плеер, спутник антеннин ресиверĕ, дистанциллĕ управлени икĕ пульчĕ, дисксем чикнĕ. Çапла вара «кукăр алăллăскерĕн» пурлăха ăçтан вăрласа тухнине каласа пама тивнĕ. Маларахах вăрă шухăшне тытнăскер Мăн Тутаркас ялĕнчи пĕр хуçалăхри çуртăн чўрече рамине илсе шала кĕнĕ, çак япаласене вăрласа тухнă, пĕтĕмĕшле вара виçĕ пин тенкĕ ытла тăкак кўнĕ хуçалăхри çынна. Халĕ ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарас ыйту тăрать.

## Электричество пралукĕ юсавсăр пулнипе

Чылай хуçалăхра кивелсе çитнĕ электричество пралукĕпе усă кураççĕ, çакă вара пушар тухас тĕлĕшпе пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Çавăнпа та киввине çĕннипе ылмаштарас тĕлĕшпе пĕр тăхтаса тăмасăр пурин те тимлемелле, инкек-синкек пуласса кĕтмелле мар. Акă нумаях та вăхăт иртмерĕ, Куçкин ялĕнче вут-çулăм алхасрĕ. Йывăç пўрт, сарай тата хуралтă кĕлленчĕ. Пушар пулнă вăхăтра кил хуçи Мускав облаçне ĕçлеме кайнă, килте никам та пулман.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн

## Тав тăватпăр

Москакасси ялĕнче пурăннă, хамăра çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă тата йывăрлăхра яланах пулăшнă анннене, хунямана, асаннене, кукамая, сывăх тăвана Анфиса Владимировна Овчинниковăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн Муркаш райпо коллективне тата тăвансене, ял-йыша, кўршĕсене чĕререн тав тăватпăр. Çавăн пекех пирĕн сывăх çыннămăрăн сывлăхĕшĕн юлашки кунччĕнех тăрăшнăшăн Муркашри тĕп больницăра ĕçлекенсене тав сăмахĕ калатпăр.

**Мăшăрĕ, хĕрĕсемпе ывăлĕсен çемйисем, тăванĕсем.**




Прогноз погоды

| | среда 31 августа | | | | четверг 1 сентября | | | | пятница 2 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +17 | +23 | +28 | +20 | +18 | +23 | +26 | +20 | +17 | +23 | +27 | +19 |
| Давление мм | 745 | 745 | 745 | 745 | 745 | 743 | 743 | 743 | 742 | 741 | 740 | 740 |
| Влажность % | 67 | 58 | 36 | 67 | 72 | 58 | 45 | 58 | 73 | 54 | 37 | 70 |
| Ветер м/сек | Ю-З 4 | Ю-З 4 | З 3 | Ю 2 | Ю 2 | Ю 3 | Ю 4 | Ю-З 3 | Ю 3 | Ю 4 | Ю 5 | Ю 3 |
| Солнце восход/заход | | 05:54 | 19:51 | | | 05:56 | 19:49 | | | 05:58 | 19:46 | |
| Луна восход/заход | | 09:19 | 19:58 | | | 10:50 | 20:18 | | | 12:20 | 20:44 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерŷ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерŷ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.**
**Пичете панă 30.08.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4343.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерŷ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.